Йытăпа кушак
Юптару

— Хам-хам, халĕ çием,
Шăм пулсан хам кăшлам,
Пĕртак сана пулăшам,
Пĕрле пурăнар.

Пĕркунне хăвна
Хăна тунăччĕ.
Юлашки пăтта
Сана панăччĕ;

Тус-йышлă пулар, —
Терĕ, тет, йытă
Аш çиекен кушака.

— Мăр-мăр, мăшăр мар,
Пĕрле çиме кирлĕ мар,
Парсанах йăтăн-хыпăн,
Кайса чикĕн карланка.

Пулĕ çиесси,
Анчах мĕн усси?
Йывăрлатать шăмшака,
Хăш чух хăстарать,
Е пыра ларать,
Инкек çукран инкеке
Тĕк тунă чух мĕн шырас?
Ашĕ те çав лептĕрке,
Епле унпала сăйлас? —

Терĕ, тет, хирĕç
Кушак мăрлатса
Кукăр хӳреллĕ йытта.
Хăй çавăнтах кĕç
Хăпарса карĕ, тет, часрах
Йывăç çине ашĕпех.

Йытă аялтах,
Çăварне уçнипех,
Тăрса юлчĕ, тет,
Хӳрине усса,
Шăртне тăратса,
Калла кайрĕ, тет.

Çинĕ чухне: кашăк пар,
Ĕçленĕ чух: сывă мар.
Хăна тусан — хурăнташ,
Хамран ыйтсан — ан паллаш.
Çапла пирĕн тĕнчере
Паян кун та ĕмĕртен.

1913 г.

*Шупуççынни, Н. Йытăпа кушак : юптару // Шупуççынни, Н. Суйласа илнисем / Н. Шупуççынни. - Шупашкар, 1958. – С. 200-201.*